## Малтанхи юррӑмсем

«С годами песни старые дороже:
Они былую молодость тревожат...»
*Алексей МАРКОВ*

Ылтӑн сӑмахсем!.. Ҫав тери тӗрӗс калана вырӑс поэчӗ. 1930-мӗш ҫулта юрӑсем ҫырма пуҫларӑм эпӗ. Кӑҫал ӗнтӗ унтанпа 50 ҫул ҫитет. Пӗтӗмӗшпе 700 юрӑ ытларах ҫыртӑм. Анчах та малтанхи юррӑмсем паян та асрах, паян та хаклӑ вӗсем маншӑн. Ф. Павловпа В. Кривоносов, пысӑк талантлӑ композиторсем, музыка техникумӗнче вӗреннӗ чухне мана юрӑсем ҫырма вӗрентрӗҫ, творчество ҫулӗ ҫине тухма пулӑшрӗҫ. Вӗсен ятне, пархатарлӑ ӗҫне эпӗ нихӑҫан та манас ҫук.

Калас пулать, ҫав ҫулсенчех Г. Хирбю те юрӑсем ҫырма пуҫларӗ, 1932-мӗш ҫулта унпа эпир музыка техникумӗнчен пӗрле вӗренсе тухрӑмӑр.

1930—1935 ҫулсенче эпӗ хорпа тата пӗччен юрламалли юрӑсем чылай ҫыртӑм. Вӗсем хушшинче: «Ушкӑн ҫулпа» — сӑвви А. Петоккин, «Эпир ударник» — сӑвви Уйӑп Мишшин, «Йӗтӗн» (хӗрарӑм хорӗ валли) — сӑвви И. Тукташӑн, «Пирӗн ҫар» — сӑвви Ехрим Иванӗн тата ыттисем те. Митта Ваҫлейӗ, М. Нямань, Мӗтри Ваҫлейӗ сӑввисем тӑрӑх ача-пӑча юррисем кӗвӗлерӗм. Консерваторире вӗреннӗ ҫулсенче нумаях ҫыраймарӑм. 1938-мӗш ҫулта пӗччен сасӑпа юрлама ҫырнӑ «Вӗҫевҫӗ хӗр» балладӑна ҫеҫ (сӑвви М. Уйӑпӑн) асӑнса хӑварас килет.

Халӗ эпӗ малтанхи хӑш-пӗр юрӑсем ҫинче кӑштах чарӑнса тӑрасшӑн.

1932-мӗш ҫулта В. Долгов-Хударсен «Колхоз ырашӗ» сӑввине кӗвӗлерӗм (каярахпа юрӑ ятне «Уйра ыраш ылтӑн пек» тесе каларӑмӑр). Ҫав ҫулах ӑна В.П. Воробьев ертсе пынипе Чӑваш государство хорӗ юрлама пуҫларӗ. Эпӗ хам та ун чухне ҫав хорта юрлаттӑм, пӗр вӑхӑтрах хор директорӗн помощникӗнче ӗҫлеттӗм. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн ҫав юрра Чӑвашсен юрӑпа ташӑ ансамблӗ Мускав валли пленка ҫине ҫырчӗ, ҫавӑн хыҫҫӑн ӑна радиопа та час-часах итлеме пулатчӗ. Пӗлтӗр ӑна телевиденипе радио хорӗ те пленка ҫине ҫӗнӗрен ҫырчӗ.

Консерваторире вӗреннӗ чухне, ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче, кашни ҫулах эпӗ Ильинкӑри кану ҫуртӗнче пулаттӑмччӗ. 1940-мӗш ҫулта, е июль, е август уйӑхӗнчеччӗ, халӗ тӗрӗсех астӑваймастӑп, «Чӑваш коммуни» хаҫатӑн виҫҫӗмӗш страницинче пӗр сӑвӑ пичетленнӗччӗ. Авторӗ — С. Элем. «Тухрӑм эпӗ Атӑл хӗррине, итлемешкӗн ҫӗршыв юррине» — ҫак сӑмахсемпе пуҫланать сӑвӑ. Ҫав

тери килĕшрĕ мана сăвви, илемлĕ, чуна çĕклентерекен çепĕç сăмахсем. Çавăнтах юрă кĕввине кăштах кĕвĕлерĕм те... Часах Мускава вĕренме тухса каймалла пулчĕ. 4-мĕш курсра çав тери предметсем нумай, пушă вăхăт пачах та çук, шухăш-кăмăл вĕренӳ çинчен кăна. Çапла вара, пуçланă юрра вĕçлеймерĕм. 1941-мĕш çулхи июнь уйăхĕнче вăрçă пуçланчĕ, июль уйăхĕнче эпир (студентсен пысăк ушкăнĕ) Мускава сыхлама йĕркеленĕ халăх ополчени ретне тăтăмăр. Çав çулах, кĕркунне, пире консерватори программине вĕçлеме ополченирен каялла тавăрчĕç. Мускав консерваторине эвакуаци йĕркипе Саратов хулине куçарнăччĕ. Çапла вара, 1942-мĕш çулхи июнь уйăхĕнче, консерваторие Саратовра пĕтерме тӳр килчĕ. Июль уйăхĕнче эпĕ Шупашкара таврăнтăм. Мана Чăвашсен юрăпа ташă ансамбльне ертсе пыма чĕнсе илчĕç.

1941-мĕш çулхи февраль—март уйăхĕсенче эпĕ И. Тукташăн «Шурă роза» сăввине кĕвĕлеме пуçларăм. Сăввине мана Шупашкарта пулнă чух И. Тукташ хăех панăччĕ. Çак сăвă та манăн чунăма çав тери килентерчĕ. Кĕввине пĕтĕмпех сырса пĕтертĕм, анчах та аккомпанемента вĕçне çитиех пĕтереймерĕм. Мĕн тăвăн — вăрçă. Шупашкара таврăнсан, эпĕ мĕнпур çамрăк хастарлăха, пултарулăха çак икĕ юрра вĕçлес ĕçе хыврăм. Вăхăт нумай та иртмерĕ, икĕ юрри те хатĕр пулса çитрĕç, часах иккĕшне те ансамбльпе юрлама хатĕрлерĕм: «Çамрăксен юрри» — тăватă саслă хутăш хор, «Шурă роза» — солисткăпа хĕрарăм хорĕ валли. Солисткисем А. Казаковăпа З. Трофимова пулнăччĕ. Иккĕшĕ те çав тери хитре юрлатчĕç. Çапла вара икĕ çĕнĕ юрă ансамбль концерчĕсенче янăрама пуçларĕ.

Итлекенсем вĕсене яланах ăшшăн кĕтсе илетчĕç. Ку юрăсем часах халăх хушшине анлăн сарăлчĕç, хор коллективĕсем вĕсене хăйсен репертуарне кĕртрĕç. Паян кун та вĕсене халăхра юрлаççĕ. Чăвашрадио хăйĕн ĕçне кашни кунах «Çамрăксен юррипе» пуçлать. Чăвашсен паллă юрăçи Т. Чумакова «Шурă розăна» симфони оркестрĕпе пĕрле юрлать, ăна пленка çине те çырса илнĕ, Мускавран та илтме пулать. «Çамрăксен юррине» вырăсла Мускаври издательствăсем пилĕк хут пичетлесе кăларчĕç.

Вăрçă вăхăтĕнчи çулсенче эпир Аркадий Эсхельпе чылай юрă кĕвĕлерĕмĕр. Уйрăмах «Çапăçу юрри» асра. Фашизма аркатма, çĕнтерме чĕнет çак юрă. Ахаль мар ăна вăрçă кунĕсенче кашни концертра илтме пулатчĕ. 1944-мĕш çулта Чăваш академи театрĕ хăйĕн сцени çинче А. Кăлканăн «Иван Кадыков» пьесине выляса пачĕ. Унăн музыкине эпĕ йĕркеленĕччĕ. Çак пьесăри такмак майлăрах çырнă «Хĕрлĕ Çарти туссене» юрă часах халăх хушшине сарăлчĕ. Вăрçă хыççăн унăн ятне «Совет салтакĕсене» тесе çирĕплетрĕмĕр. Хăш-пĕр хор коллективĕсем ăна юрласа та ташлатчĕç.

Вăрçă вĕçленнĕ çул çырнă юрăсенчен манăн уйрăмах икĕ юрра палăртас килет: «Ирхи юрă» — сăвви В.Бараевăн тата «Тухăçран хăпарсан шурăмпуç» — сăвви В.Урдашăн. Иккĕшĕн те сăввисем пит хитре, кĕввисем те ăшă, чуна çĕклентермелле пулчăр тесе тăрăшрăм.

«Тухăçран хăпарсан...» манăн В. Урдаш сăвви тăрăх йĕркеленĕ пĕрремĕш юрă пулчĕ. Малалла вара эпир унпа çирĕм çул хушши ытла тачă çыхăну тытса, нумай юрă çыртăмăр. Урдаш чăн-чăн поэт-юрăçă, çав тери тарăн ăнланатчĕ вăл юрă сăввисен уйрăмлăхне...

Каярахпа ҫӗнӗ юрӑсем татах та ҫуралчӗҫ. 50-мӗш ҫулччен ҫырнӑ юрӑсем хушшинче уйрӑмах ҫак юрӑсене асӑнса хӑварас килет: «Телейлӗ туслӑх» — сӑвви В. Давыдов-Анатрин, «Кӳлӗ хӗрринче» — сӑвви И. Тукташӑн, «Хӑна юрри» — сӑвви В. Веселовӑн.

1949-мӗш ҫулта Мускаври Тӗп музыка издательстви вӗсене вырӑсла-чӑвашла текстсемпе пичетлесе кӑларчӗ. 1950-мӗш ҫулта, Мускавра чӑваш литературин эрнине ирттерме палӑртнӑ май, П. Хусанкайпа «Салам, Мускав» ятлӑ юрӑ ҫыртӑмӑр. Ӑнӑҫлӑ юрӑ пулчӗ вӑл. Асӑннӑ юрӑсемшӗн тата «Ҫамрӑксен юрришӗн» 1952-мӗш ҫулта эпӗ СССР Государство преми лауреачӗн ятне илме тивӗҫлӗ пултӑм.

Хӗрӗхмӗш ҫулсен вӗҫӗнче А.Алга сӑввипе ҫырнӑ «Мирлӗ пурнӑҫшӑн» юрра та манса хӑварас килмест. Ҫав сӑвӑпа кӗвӗре хамӑр халӑхӑн пархатарлӑ шухӑшкӑмӑлӗ лайӑх сӑнарланнӑн туйӑнать.

Юрӑсем, юрӑсем... «Атӑлпала Сӗве хушшисем», «Ҫутӑ ӗмӗт», «Юратнӑ парти», «Ҫӗршывӑм, савӑн», «Такӑрлатӑп урама», «Пирӗн председатель»... Ленин, Парти, Мир, тулӑх пурнӑҫ, колхозлӑ ял, хастарлӑ ҫамрӑклӑх — манӑн юрӑсен тӗп темисем...

Каярахпа манӑн ҫӗнӗ авторсемпе, талантлӑ поэт-юрӑҫӑсемпе тачӑ ҫыхӑну пуҫланса кайрӗ. Вӗсем — Василий Давыдов-Анатри, Николай Сандров, Георгий Ефимов. Сахал мар юрӑсем ҫыртӑм эпӗ вӗсемпе пӗрле...

Ҫӳлерех асӑннӑччӗ ӗнтӗ, юрӑсен шучӗ паянхи куна ҫич ҫӗртен те иртрӗ... Апла пулсан та малтанхи юрӑсем паян та асрах, паян та хаклӑ вӗсем маншӑн...